ĕçлерĕ. Унăн прозинче кивелнĕ хăш-пĕр штамппа примитивлă сăнлăх мелĕсене пăрахăçлас шухăш полемикăлла палăрать. "Чăваш кĕнекисенче кашни пуплĕв тенĕ пекех абзацланса пырать те – вĕлт! вĕлт! страница хыççăн страница. Кун-сăр пуçне çынсене калаçтарма юратаççĕ чăваш писателĕсем... Вĕсен кĕнеки-сенче пуплевсем кĕске, юмахри пек, – ку та çăмăллатать вулава". Кăна вăтăрмĕш çулсенчи вулакан Андрей асăрханă. Таллеров прозинче йышлă тĕл пулакан хутлă предложенисем чăваш çыравçи Л.Толстой, Ф.Достоевский, И.Бунин опычĕпе тарăна кĕрсе паллашнине çирĕплетеççĕ. Проза çĕнелĕвĕнче, унăн пĕтĕмĕшле аталанăвĕнче палăракан çĕнĕлĕхсенче Лаврентий Таллеров тӳпи пысăк пулнине паян асăрхамасăр тăма çук ĕнтĕ.

Эпĕ сăнанă тăрăх, писатель юлашки вăхăтра çырнă хайлавĕсенче хăй умне çĕнĕ, никам тĕкĕнмен каçалăксем уйăрса палăртса пычĕ.

Çак сăнавра витĕмлĕ чăнлăх пуррине вăл "Пурнăç - пурăнма" повеçĕпе тепĕр хут çирĕплетсе пачĕ. Ку хайлавпа паллă çыравçă хăй пурнăçĕн итогĕсене пĕтĕмлетрĕ тейĕн – пирĕнтен уйрăлса кайиччен ăна вĕçлеме вăй-хăват (хытă хавшанă сывлăхне пăхмасăр) çитерчĕ.  Каламалли, çырса кăтартмалли, шухăшлани-сăнани чунра капланса тулнă авторăн. Повĕçри ĕç-пуçсем иртнĕ ĕмĕрĕн 50-60-мĕш çулĕсемпе çыхăннă пулин те, автора хальхи пурнăçăн хивре тĕввисемпе тӳнтер енĕсем те хытă шухăшлаттарни сисĕнет. Тĕпре - Владленăн синкер хăрушă шăпи. Талантлă йĕкĕт, çуначĕсене чăн-чăн пысăк искусствăра сарса çĕкленме çуралнă çын ним çук çĕртех тӳсмелле мар йывăр инкеке кĕрсе ӳкет, тĕрмене лекет.

Пурнăç – пурăнма, астутарать автор. Анчах та чылай чухне хăш тĕлте такăнасса пачах та пĕлме çук-çке, пĕлес пулсан...

Таса та пиçĕ чунлă Владлен пĕрре мар ултав серепине çакланать, такăнса ӳкет, анчах та тăрса малаллах талпăнать...

Турă хăй чуп тăвакан этеме хăватлă талант парать иккен. Кунпа пĕрлех ăна пурнăç тăршшĕпех тимлĕ сăнаса тăрать, ун чунне кăварлантарать, сивĕнме памасть. Шăп та лăп çавна пула, Çеçпĕл калашле, ним айăпсăр «асап юпи» çумне пăталаннă Владлен драма хайлама вăй çитерет.

Этем чунĕ хăрушă йывăрлăха çĕнтерет.

**Юрий АРТЕМЬЕВ, тĕпчевçĕ**

# Пĕр çулпах утнă эпир

Пирĕн ăрăва çамрăклах хисеплĕ те сумлă, яваплă та кирлĕ ĕçсене шанса панă. Вăрçă ачисенчен чылайăшĕн ĕç стажĕ 14-15 çултан пуçланнă. Ĕмĕтлĕ те çунатлă ăру пулнă вăл – вăрçă ачисен ăрăвĕ.

Хăрушă вăрçă вĕçленни темиçе çул иртнĕ-иртмен пирĕн çĕр-шывра тăлăх-туратăн çӳрекенсем юлмарĕç. Вĕсене пурне те ача çурчĕсене вырнаçтарса

пĕтерчĕҫ. Аллăмĕш ҫулсен вĕҫĕнче ҫут ĕҫ министерствин пулнă ача ҫурчĕсене социаллă пулăшу министерствине пама йышăнсан сывă ачасене пурне те интернатсене куҫара-куҫара кайрĕҫ. Ҫут ĕҫ министерствин ача ҫурчĕсем хупăнаҫҫĕ текен хыпара пĕлнĕ-пĕлмен вĕсенче ĕҫлекенсем ĕҫрен туха-туха кайма тытăннă. Вара пире, Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче виҫҫĕмĕш курсра вĕренекен 4 студента, 1960 ҫулхи ака уйăхĕ пуҫламăшĕнче ректор патне чĕнтерчĕҫ, Нурăсри шефа илнĕ ача ҫуртне воспитатель пулса ĕҫлеме каймашкăн ӳкĕтлерĕҫ. Ҫавăнтах виҫҫĕмĕш курсшăн зачетсем йышăнчĕҫ, экзаменсем тыттарчĕҫ. Тăвата студента тăвата ушкăн ҫирĕплетсе пачĕҫ. Мана «вăтам» ушкăн лекрĕ.

Ҫĕнĕ вĕренӳ ҫулĕ пуҫланиччен шкула ҫӳрекен ачасене пурне те интернатсене иле-иле кайрĕҫ. Манăн юлташсем ытти студентсемпе пĕрле Казахстана ҫерем ҫĕр тырри-пуллине пуҫтарма ăсанчĕҫ. Мана ямарĕҫ. Ача ҫурчĕн спорт хатĕр-хĕтĕрĕшĕн явапли эпĕ шутланатăп та, ăна йышăнса юлакан тупăнмарĕ. Ҫĕнĕ ҫул умĕнхи кун кăна эпĕ ача ҫурчĕпе сывпуллашрăм. Ачасем, кунтах ĕҫлеме юлнă ҫынсем мана ушкăнпах ăсатса ячĕҫ. Кăнтăрла иртсен хам ҫуралнă тăрăха – Комсомольскине – ҫитсе ӳкрĕм. Шкулта вĕреннĕ чухнех «Октябрь ялавĕ» хаҫат редакцине тăван кил вырăннех хунă та, хальхинче те кĕрсе тухасах терĕм.

Ун чухне редакцире виҫҫĕн-тăваттăн, типографире тепĕр ҫавăн чухлĕн ĕҫленĕ. Хаҫат-листовка икĕ страницăпа кăна тухса тăнă.

Алăкран кĕрсе тăтăм кăна, пурте вырăнтах хускалчĕҫ. Мана кĕтсех тăнă тейĕн. Хаҫат редакторĕ Лаврентий Васильевич Таллеров алăран ҫавăтрĕ те хăйĕн ĕҫ пӳлĕмне илсе кĕчĕ. Пирĕн хыҫҫăнах хаҫатăн явапла секретарĕ Геннадий Степанович Мальцев пырать. Мĕн те мĕн калаҫнине халĕ ас тумастăп, ҫапах та «Ĕҫе юратмалла кăна – ĕҫ хăех вĕрентет», – тени аса кĕрсе юлнă пек. Ку сăмахсене Лаврентий Васильевич ҫавăн чухне каларĕ-ши? Тен, урăх чухне те – кăна та ыррăн пĕлместĕп. Анчах сăмахĕсем асрах пурăнаҫҫĕ. Вĕсем пĕр вăхăтрах маншăн хушу та, мухтав та пулнă.

1960 ҫулхи раштавăн 30-мĕшĕнче Лаврентий Васильевичăн, 19-мĕш номерлĕ приказĕпе килĕшӳллĕн эпĕ «Октябрь ялавĕ» хаҫатăн явапла секретарĕ пулса тăтăм.

Явапла секретаре ун чухне кăна мар, паян та штаб пуҫлăхĕ теме хăнăхнă. Хаҫат эрнере виҫĕ хут тăватшар страницăпа тухса тăма тытăнчĕ. Редакци штачĕ 14 ҫынна ҫитрĕ.

Ун чухне те, хальхи пекех, хăйсем ҫыракан редакторсем йышлăн пулман. Лаврентий Васильевич пачах урăхлачч ĕ. Пире, хаҫат ĕҫне тин кăна кӳлĕннĕ ҫынсене, вăл сăмахпа мар, хăйĕн тĕслĕхĕпе вĕренететчĕ. Ун чухне халĕ манăҫа тухнă очерк тата фельетон жанрĕсем хисепречч ĕ. Вĕсем шăпах унăн юратнă жанрĕсемччĕ. Ăна курах пулĕ эпĕ те ҫавсене килĕштерме пуҫларăм.

Редакци тытăмĕнче парти пурнăҫ пайĕпе ял хуҫалăх пайĕ пулнă. Вĕсем малти страницăсене тултарса тăнă. Мана, штаб пуҫлăхне, юлашки страница кăна

тивӗҫетчӗ. Унта мӗн пулмалла ӗнтӗ? Литература страници, спорт хыпарӗсем, культура хыпарӗсем, кулӑш кӗтесӗ.

Чылайӑшӗн хаҫата юлашки страницӑран пуҫласа вулас йӑла пур. Эпӗ хам та ҫаплах тӑватӑп. Ку ӗнтӗ вӑл страница чи вуланаканни пулнинчен килет. Лаврентий Васильевич та ҫав страницӑна ыттисенчен пуринчен те тимлӗрех пӑхса тӑратчӗ пек туйӑннӑ мана. Вӑл Мускав хаҫат-журналне вуласах пынӑ. Тӑваттӑмӗш страница валли пулмалла пек материал тӗл пулсан, ман патӑма ыратчӗ. Ак ҫапла ҫырмалла ӑна тесе каланине нихӑҫан та илтмен, «Вуласа тух-ха», – тетчӗ те сӗтел ҫине хурса хӑваратчӗ. Вӑл хӑй те ку страница валли кулӑшла калавсем, юморескӑсем ҫырсах тӑратчӗ. Пурӑна-киле вӑл Чӑваш кӗнеке издательствинче «Култарам-ха арӑмран» ятпа вӗсен пуххине кӑларчӗ. Ун чухне издательство темпланне лекме, ай, йывӑр та йывӑрччӗ. Геннадий Мальцев унран та маларах хӑйӗн кулӑшӗсене «Ҫуралнӑ кун» ятпа «Капкӑн» библиотекинче пичетлерӗ, хыҫҫӑнах кӗнеке издательствинче унӑн «Уй куҫлӑ, вӑрман хӑлхаллӑ» кулӑш калавӗсен пуххи тухрӗ. Манӑн вара черетӗм час ҫитеймерӗ. Ҫапах эпӗ те кулӑш кӗнекиллӗ пултӑм. «Ир такӑнсан» ятпа кӑлартӑм ӑна.

Очерк ҫыракан ӑстасем ун чухне те йышлӑн марччӗ. Район хаҫачӗсенче кӑна мар, республика хаҫат-журналӗнче те вӗсем темиҫен кӑна пулнӑ. Мана вара вӑл жанр туртсах каяймарӗ. Писательсенчен Леонид Агаков кулӑшла калавсен пуххисемпе очерксен кӗнекисем кӑларсах тӑратчӗ. Вӑл та Лаврентий Васильевич пекех писателӗн пултарулӑх ҫулне очерк кӗнекипе пуҫланӑ. Унӑн «Волонтер» коммунӑн пурнӑҫӗ» очеркӗ 1930 ҫултах кӗнекен пичетленсе тухнӑ. Лаврентий Васильевичӑн «Ӗҫченсем» очерксен пуххи Чӑваш кӗнеке издательствинче 1965 ҫулта кун ҫути курчӗ.

Лаврентий Васильевич каланӑ пекех, ӗҫ хӑех мӗн те мӗн тумаллине вӗрентсе пычӗ. Хаҫат калӑплама хӑнӑхса кӑна мар – ӑсталансах та ҫитрӗм пулас. Ун чухне сас паллисене алӑпа пуҫтарнӑ та, каҫа юлса калӑплаттӑмӑр номере. Пӗринче Лаврентий Васильевич пушӑ касса умӗнче верстатка тытса ларнине куртӑм. Вӑл наборщиксене пулӑшма шутланӑ иккен. Редактора кура эпир те пушӑрах чухне кассӑсем умне пыра-пыра ларма тытӑнтӑмӑр. Тем пысӑк ӗҫех тӑвайман пулӗ те, икшер-виҫшер верстатка таранах наборласа параттӑмӑр. Манӑн, яваплӑ секретарӗн, яваплӑ тепӗр ӗҫ пурччӗ тата: авторсене гонорар ларта-ларта памаллаччӗ. Калама ҫуках юратман ӗҫчӗ вӑл маншӑн. Ӗҫ укҫи илнӗ кунсенче хам еннелле сиввӗн пӑха-пӑха илекенсем пур пекех туйӑнатчӗ. Лаврентий Васильевича темиҫе хут та каларӑм: «Хӑвӑрах валеҫӗр-ха гонорар укҫине», – терӗм. Вӑл мана итлесшӗн те марччӗ. Ку ыйтӑва темиҫе хут хускатсан вӑл кирлӗ сӗнӳ пачӗ: «Гонорар лартнӑ номерсене редакцире ӗҫлекен пултарулӑх ҫыннисене пурне те кӑтартма та алӑ пустармалла». Ку опыт темиҫе ҫултан кирлӗ пулчӗ. «Коммунизм ялавӗ» хаҫат редакцийӗнче ӗҫленӗ чухне ӗҫ укҫи илнӗ кунсенче мӑкӑртатса калаҫакансем пурччӗ. «Ҫапла тӑвар-мар-и?» – тесен хаҫат редакторӗ хапӑлах пулчӗ.

Вăрçă ачисем тĕллĕн пурнăç юнтармăшĕсем те тупăнсах пыратчĕç. 1942 çулта çуралнисен çар хĕсметне тăма вăхăт çитнĕ çулхине хальччен илсе каймасăр тăнă студентсене те, куçăн-куçăн мар-и вĕреннине пăхмасăрах, институт пĕтернисене те – пурне те повесткăсем пама тытăнчĕç. Мана та хăнăхса кăна çитнĕ ĕçе пăрахса салтак гимнастерки тăхăнма тиврĕ. «Октябрь ялавĕ» тĕллĕн те пăтăрмах тупăнчĕ. Тĕнчене тĕлĕнтернĕ Хрущев «реформатор» ирĕкĕпе районсене пысăклатрĕç. Комсомольски районне пайларĕç. Çуррине Патăрьел, тепĕр çуррине Канаш районĕсене пачĕç. Хаçат ĕçченĕсен пĕр пайĕ Патăрьеле, тепĕр пайĕ Канаша куçса кайрĕç. Çар службине вĕçлесе таврăнсан эпĕ тăван ялти шкула вырăс чĕлхипе литератури преподавателĕ пулма вырнаçрăм.

1965 çулхи пуш уйăхĕнче «Октябрь ялавĕ» хаçат çĕнĕрен тухма тытăнмаллаччĕ. Лаврентий Васильевича унăн редакторĕ пулма çирĕплетнĕччĕ ĕнтĕ. Мана яваплă секретарь пулма чĕнетчĕ. Анчах шкул директорĕ ним тусан та ярасшăн мар. Вĕренӳ çулĕ вĕçлениччен тĕ пулин ĕçлеттересшĕнех. Ман вырăна йышăнма çын çук иккен. Лаврентий Васильевич райкомра пулнине пĕлетĕп, анчах кампа мĕн каласнине чухлаймастăп та.

Ирхине 8 сехетре пирĕн шкул умне райком машини пырса чарăнчĕ. Шкулта пĕрремĕш урок пуçланнă кăна-ха. Пĕр кĕтмен-туман çĕртен класс алăкĕ яриех уçăлса карĕ. «Директор патне!» – тесе кăшкăрни илтĕнчĕ. Хăрасах ӳкмерĕм те, анчах тем кĕтмен ĕç сиксе тухнăн туйăнчĕ. Директор пӳлĕмĕнче мана райкомăн иккĕмĕш секретарĕ Леонид Егорович Андреев кĕтсе тăрать. Эпĕ вара кайиччене вăл комсомол райкомне ертсе пыратчĕ. Района пайласан ăна çут ĕç министерствине илсе кайнăччĕ. Район çĕнĕрен йĕркелесен парти райкомĕн иккĕмĕш секретарьне суйларĕç.

Çапла вара пилĕк çул каяллахи пек çĕнĕрен редакци йышне пуçтармалла, типографине çĕнĕлле йĕркелемелле пулса тухрĕ. Лаврентий Васильевич малтан пĕрле ĕçленĕ çынсене каялла тавăрма пултарчĕ. Типографире ĕçлекенсем те пурте тенĕ пекех тупăнчĕç. Анчах типографийĕ часах ĕçлесе каяймарĕ. Чылай вăхăт Канаша хутламалла пулчĕ.

Черетлĕ номере калăпласа çитереттĕм те макетпа пĕрле текстсене, сăн ӳкерчĕксене илсе Канаша тухса каяттăм. Хамăнах корректор та пулмаллаччĕ. Ирхине хаçат тĕркисене йăтăрласа Комсомольскине таврăнаттăм, тӳрех почта уйрăмне леçсе хураттăм. Редакцин машина пулман. Автобуспах çӳренĕ.

Ун чухне район хаçачĕсен çумĕнче кăна мар, нумай тиражлă хаçатсен çумĕнче те литература пĕрлешĕвĕсем пулнă. Миçе çынна литература çулĕ çине тухма пулăшнă-ши вĕсем? Ăна шутлакан пулман. Шутлама тытăнсан та вĕçне-хĕрне тухма пулмĕ. Шкул ачисем те, учительсем те, колхоз председателĕ те, сумлă пенсионерсем те пулнă вĕсен йышĕнче. Социологсем тахçанах тĕпчесе пĕлнĕ: хăйĕн ĕмĕрĕнче çынсен 70 проценчĕ сăвă хайлама хăтланать иккен. 70 процентлă сăвăçсем кăна мар, чăн-чăннисемех ураланнă пирĕн хаçат çумĕнчи литература пĕрлешĕвĕнче. Çакна Лаврентий Васильевич ун чухнех курса тăнă.

Çавăнпа ларусене ячĕшĕн çеç мар, ĕçлĕ те пулас çыравçăсемшĕн усăллă ирттерме тăрăшнă.

Редактор ĕçĕ пĕрре те çăмăл мар. Ăна эпĕ хам тÿссе курнипе те лайăх пĕлетĕп. Редакторĕсем те тĕрлĕреннисем пулаççĕ. Ман тĕллĕн темли-темли те тĕл пулнă. Вĕсенчен пĕри ман калава турта-турта, кĕскете-кĕскете калав конспекчĕ туса пичетленĕччĕ. Лаврентий Васильевич çаврăнăçусăр сăмах майлашăвĕсене тÿрех асăрхатчĕ. Анчах хаçат статйисене те, литература произведенийĕсене конспект шайне антарса лартман. Авторне хайне пĕлтермесĕр пĕр предложение те хуратса пăрахмастчĕ. Пĕртен пĕр пăтăрмах асра юлнă çапах та. Ун чухне Лаврентий Васильевич «Тăван Атăлăн» тĕп редакторĕччĕ, эпĕ проза пайне ертсе пыраттăм.

Хĕветĕр Уяр турист пулса Инди çĕр-шывне курса çÿренĕ хыççăн çул-йĕр очеркĕ çырнăччĕ. Ăна пичетлеме пире сĕнчĕ. Малтан Лаврентий Васильевич хăй вуласа тухрĕ.Вĕсем иккĕшĕ пĕр чĕлхеллĕччĕ. Туслă тесен те йăнăш мар. Пичете хатĕрлеме мана шанчĕç. Федор Ермиловича эпĕ хам та лайăх пĕлнĕ. Çавăнпа унăн çул çÿрев очеркне çав тери тимлĕн редакцилерĕм. Очерка типографие антарма вăхăт çитсен Лаврентий Васильевич ман пÿлĕме васкаса кĕчĕ те пăшăлтатнă пек калаçма пуçларĕ. Уяв очеркĕнчи пĕр вырăн канăç паман иккен ăна. Федор Ермилович Индире вăрăсем туристсем хыççăн йĕрлесех çÿреççĕ, чăматана-мĕне самантлăха-мĕне кăна пулин те пăхмасăр хăварсан вăл çухаласса пĕлсех тăр тесе çырнăччĕ.

– Çапах та Инди империализм çĕр-шывех мар-çке, атя, туртар çак вырăна, – терĕ Лаврентий Васильевич.

Килĕшрĕм. Автор корректурине Федор Ермиловича хăйне те вулаттартăмăр. Вăл тепĕр кун ĕç кунĕ пуçланнă-пуçланман редакцие персе те çитрĕ. Тÿрех тĕп редактор алăкне шаккарĕ.

Хуратса хунă абзаца çĕнĕрен наборлама тиврĕ вара.

Пурнăç çулĕ çине тухнă чухне вăрçă ачисем тĕллĕн ырă еннелле тĕллесе яракансем те тупăнсах пычĕç. Маншăн вăл Лаврентий Васильевич пулчĕ.

**Денис ГОРДЕЕВ,**
**Чăваш халăх писателĕ**